Сăмах – министра

Çĕрпе эффективлă ĕçлесси – тĕп задача

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

– Çĕрĕн ытларах пайĕ арендăра. Арендаторсем хăйсен тивĕçне туллин пурнăçлаççĕ-и тата патшалăх харпăрлăхне тĕрĕслесси мĕнле пулса пырать?

– Пирĕн министерство сотрудникĕсем хăйсем çине хунă тивĕçе пурнăçласа республика харпăрлăхĕнчи çĕр участокĕсемпе епле усă курнине тĕрĕслесех тăраççĕ. Кăçалхи пĕрремĕш кварталта эпир ял хуçалăх предприятийĕсем çур акине хатĕрленнине, техника ĕçе юрăхлине, вăрлăхпа минераллă удобренисем çителĕклине тĕрĕслерĕмĕр. Май-июнь уйăхĕсенче пирĕн тĕрĕслевсем çĕрпе епле усă курнипе çыхăнчĕç. Каламалла, арендаторсем республика харпăрлăхĕнчи çĕр участокĕсемпе эффективлă усă кураççĕ.

– Мĕн ытларах канăççăрлантаратьха эсир ирттерекен тĕрĕслевсенче?

– Час-часах çĕрпе туллин усă курманнине тĕл пулма тивет. Юлашки çулсенче ял хуçалăх валли специалистсем хатĕрлекен вăтам сыпăкри вĕрентӳ заведенийĕсем сахалланни пăшăрхантарать. Патшалăх учрежденийĕсем хăйсен вăйĕпе кăна унченхи вăхăтра хăйсене устав ĕçĕ-хĕлне туса пыма вăхăтсăр яланлăха панă çĕр участокĕсене ĕçлеттерсе çитереймеççĕ. Кун пек чухне ЧР Пурлăхпа çĕр хутшăнăвĕсен министерстви ял хуçалăх çĕрĕсене эффективлăрах ĕçлекенсен аллине парать.

– Алла Михайловна, республикăра пурпĕрех усă курман çĕрсем юлаççĕ-ха. Вĕсемпе епле кĕрешмелле?

– Эсир хускатнă ыйту чăнах та пур. Çĕрпе ĕçлесси çине хуçалла пăхманнисем тĕлĕшпе ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсемпе эффективлă усă курассине пăхса тăракан ведомствăсем хушшинчи комисси ĕçлет. Пирĕн специалистсем те вĕсемпе пĕрле вырăнсене тухса тĕрĕслевсем ирттереççĕ.

ЧР Министрсен Кабинечĕн кăçалхи пуш уйăхĕн 27-мĕшĕнчи «2009 çулта сезонлă уй-хир ĕçĕсене ирттерме пулăшмалли мерăсем çинчен» 94-мĕш номерлĕ йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн кăçал пусă çаврăнăшне 34,5 пин гектар çĕре кĕртме палăртнă. Патăрьел, Красноармейски, Муркаш, Шупашкар, Етĕрне районĕсенче усă курман çĕрсене кăçал пĕтĕмпех пусă çаврăнăшне кĕртме пăхнă. 2010 çулта Чăваш Республикинчи усă курман пĕтĕм çĕрĕн пусă çаврăнăшĕнче пулмалла. Усă курман çĕрсен пĕр пайĕ тайлăк тата хăйăрлă-чуллă е шурлăхлă вырăнсенче йывăç-курăкпа витĕннĕ. Вĕсем патне пыма йĕркеллĕ çулсем çукран вăл çĕрсем пусă çаврăнăшĕнчен тухса ӳкни пĕр-икĕ çул çеç те мар – вуншар çул. Вĕсене вăрман фондне куçарасси паян кун йĕркинче тăракан ыйту. Вырăнти самоуправлени органĕсен çак ыйтупа ĕçлемеллех.

Ял хуçалăх çĕрĕсен пĕрлехи харпăрлăхĕн уйрăм хуçисем çĕр пайĕсене илменни тата çĕрсем хуçасăр юлни сухаламалла çĕрсемпе эффективлă усă курассине ура хурать. Çĕр хуçи пулсан вăл çав çĕрсен малашлăхĕ пирки, унăн пулăхлăхĕпе продукци илессине ӳстересси çинчен шутлать. Çĕр участокĕ çине хăйĕн прависене саккунлă туса çитерсен ял çынни унăн тулли праваллă хуçи пулса тăрать. Ăна вăл сутма та, парнелеме те, салука хывма та пултарать. Çавăнпа та ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕр участокĕсенче пай çĕрĕсене харпăрлăха куçарса пĕтересси – муниципаллă районсемпе ял тăрăхĕсен паянхи тĕп задачи.

– Федераллă саккунпа ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсене пайсем çине валеçессине тăсрĕç. Çакăн усси пулчĕ-и?

– Асăннă ĕççене вĕçлессине икĕ çуллăха тăсни ку енпе ĕçсен хăвăртлăхне чакармаллине пĕлтермест. Паянхи куна республикипе 311 ял хуçалăх предприятийĕнче пĕтĕмпе 533,2 пин гектар çинче çĕре çĕнĕлле йĕркеленĕ. Ку вăл пурнăçламалли пĕтĕм ĕçĕн 62,4 проценчĕ. Территориллĕ çĕр йĕркелĕвĕ Елчĕк тата Муркаш районĕсенче вĕçленнĕ. Çав вăхăтрах Элĕк, Куславкка, Вăрмар, Шупашкар районĕсенче ку енпе ĕçсем юлса пыраççĕ.

«Моргаушская» МСО 50 çул тултарчĕ

Ветерансем те, çамрăксем те маттур

Строитель – мирлĕ професси. Çакна хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕнче ăнланса ĕçлесе пыраççĕ. Асăннă коллектив районта строительство енĕпе вăй хуракан тăнăç предприятисенчен пĕри. Иртнĕ вырсарни кун строительсен професси кунĕнче кунта ĕçлекенсем хăйсен предприятийĕн çуралнă кунне те паллă турĕç. Ахаль çуралнă кун та мар – 50 çул. Шăпах çакăн чухлĕ вăхăт çитрĕ хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕ йĕркеленнĕренпе кăçалхи апрелĕн 16-мĕшĕнче. Организацишĕн ку вăл ĕçлеме хăнăхса çитнĕ çамрăкăн ӳсĕмĕ. Çавăнпа та алă усса лармаççĕ кунта, историн кашни страницине ĕçпе çырса пыраççĕ, çĕршыв лартнă тĕллевсене, Президент палăртнă программăсене пурнăçлассипе çанă тавăрса ĕçлеççĕ.

Организаци хăй çамрăккине кура кунта вăй хуракансем те ытларах çамрăксем. Вĕсен вăтам ӳсĕмĕ 35 çул. Пĕрлехи тăрăшулăхпа кунти строительсем паян Муркаш-ри Парк урамĕнче 40 хваттерлĕ çурта тăвассипе, район центрĕнче, Мăн Сĕнтĕрте, Ярославкăра нумай хваттерлĕ çуртсене тĕпрен юлассипе ĕçлеççĕ.

Çамрăксем тенĕрен, Александр Федоров тĕп инженер (вăл кăçал Президент стипендиачĕ), Надежда Антонова штукатур-маляр, Андрей Сахаров каменщик, Валентина Иванова секретарь спортра тата культурăллă канура активлăх кăтартаççĕ, организаци ятне çĕклеççĕ, ветерансен ырă пуçарăвĕсене малалла аталантараççĕ. Президент стипендиачĕн чысне юлашки çулсенче çамрăксем çине-çинех тивĕçни те организацире çамрăксен ыйтăвĕ иккĕмĕш вырăнта тăманни пирки калать. Çакна илтсе иртнĕ эрне кун Лантăш уçланкинче уява пухăннă ветерансем те савăнчĕç.

– Таса уйра тенĕ пек йĕркелесе çĕкленĕ хамăр предприятире паян çавнашкал çамрăксем пирĕн ĕçе малалла тăсни савăнтарать, – терĕ уява килнĕ ветеран Вячеслав Макарович Никольский. – Тавах организацин генеральнăй директорне В. Семенова ĕççенче йывăрлăхсене çĕнсех малалла çул уçса пынишĕн, ветерансене манманшăн.

Лантăш уçланкинчи уявра малтанах пухăннисене строительство организацийĕн историйĕпе тата унăн пурнăçĕнче ырă йĕр хăварнă ветерансемпе В. Семенов генеральнăй директор паллаштарчĕ. Ун хыççăн район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов ĕçре паян палăрнисене тата ветерансене вĕсен ĕçĕшĕн чыс туса Хисеп грамотисемпе наградăларĕ, килнĕ хăнасем организацие уяв парнисемпе чысларĕç.

– «Моргаушская» МСО çĕкленĕ çуртсем района паян та илем кӳреççĕ. Кунти строительсен аллисем халĕ юсаса хăт кĕртекен çуртсем çине район çыннисем ытараймасăр пăхаççĕ. Ĕçĕн çакнашкал пахалăхне малашне те ан çухатăр, хăвăр тивĕçе çӳллĕ шайра пурнăçлăр, – терĕ салам сăмахĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов.

Савăк ташă-юрă та уявăн уйрăлми пайĕ пулчĕ.

А. БЕЛОВ.
Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.

«РСФСРăн Хура тăпраллă мар тăрăхне çĕнетнĕшĕн» медале тата «Нечерноземагропромстройăн тава тивĕçлĕ строителĕ» ят илнĕ Венера Анатольевна Золототрубова (сулахайри) паян та штукатур-малярсен бригадине ертсе пырать. Маргарита Михайловна Романова вара унăн бригадин ĕçченĕ.

1978-1998 çулсенче штукатур-малярта ĕçленĕ Людмила Ивановна Яндимировапа (сулахайра) унăн ĕçри юлташĕ пулнă Галина Ильинична Павлова.

В.В. Иванов каменщикпа пĕрле ĕç ветеранĕсем (сылтăмалла): 1966-1998 çулсенче кадрсен пайне ертсе пынă Вячеслав Макарович Никольский тата 1974 çултанпа прораб пулса ĕçлекен Петр Трофимович Медунгин.

Ыйтăм

Ял çыннисен хак памалла

ЧР Экономика аталанăвĕн министерстви августăн 17 – 30-мĕшĕсенче çынсемпе тĕл пулса социологи тишкерĕвĕ ирттерет. Граждансен медицина, шкул çулне çитмен тата хушма вĕрентӳ, культура учрежденийĕсем епле ĕçленине хак памалла. Вырăнти самоуправлени органĕсен ĕçне те пăхса тухĕç.

Экономика министерствин ыйтса пĕлмелли телефонĕ: (88352) 62-81-05.

Çĕнĕ кĕнекесем

Орининсемшĕн – пысăк парне

Муркаш таврапĕлӳçисем тăван тавралăха, кунта пурăнакан тата маларах пурăннă çынсене тĕпчесе пĕлес тесе ырми-канми тăрăшаççĕ. Хăйсен тĕпчев ĕçĕсене вара илемлĕ те пуян содержаниллĕ кĕнекесем урлă пире пĕлтереççĕ.

Акă халь кăна И.Д. Вязов халăх академикĕн черетлĕ кĕнеки кун çути курчĕ. Вăл «Оринин аваллăхĕ» ятлă. Апла Атапай - Оринин тăрăхĕнче пурăнакансемшĕн ку кĕнеке уйрăмах хаклă та интереслĕ. Оринин чăвашĕсем ăçтан тухнинчен пуçласа çак тăрăхри Талиевсем, Партăс ăраттинчи çынсем таранах çырса кăтартнă кĕнекере. Тĕн ыйтăвĕсем пирки те, хресчен вăрçи çинчен те сăмах хускатнă автор. Çавăнпа та çĕнĕ кĕнеке районти ытти çынсемшĕн те интереслĕ пулмалла.

Йĕркелĕх хуралçисем çинчен

Е. Ерагин вара района йĕркеленĕренпе 65 çул çитнине халлаласа «Муркашъен милицийĕ» ятпа пичетлесе кăларнă хăйĕн çĕнĕ кĕнекине. Кунта пирĕн районти шалти ĕçсен пайĕ 1944 çултанпа паянхи кунччен епле аталанса пынине сăнланă, пайри ушкăн-уйрăмсен ĕç-хĕлне çутатса панă. Кунсăр пуçне кĕнекере йĕркелĕх хуралĕнчи ытти органсем çинче те чарăнса тăнă автор. Милицин хисеплĕ ветеранĕсем пирки те пĕлме пулать кĕнекере.

Н. НИКОЛАЕВА.

ГИБДД пĕлтерет

Ачасен пурнăçне, сывлăхне упрамалла

Çул-йĕр çинчи инкексене пула ача-пăча суранланасси пирĕн республикăра сахал мар пулать. Уйрăмах çуллахи вăхăтра асăрханулăх ытларах кирлĕ. Акă кăçал та пĕрремĕш çур çул хушшинче республикăри çулсем çинче ачасем хутшăннипе пурĕ 83 авари пулнă. Вĕсенче 5 ачан пурнăçĕ татăлнă, 87-шĕ аманнă. Илсе панă кăтартуран 28 тĕслĕхĕнче инкексем ачасен айăпĕпе сиксе тухнă.

Мĕнле сăлтавсене пула ытларах пулаççĕ-ха ачасемпе çыхăннă çул çинчи инкек-синкексем? Çул урлă палăртнă вырăнта каçманнипе, тепĕр чух светофора пăхăнманнипе тата патне çитекен транспорт умĕпе чупса каçнипе.

Пĕрремĕш сентябрьте республикăра 126200 (пĕрремĕш классем 13100) ача шкулсенче вĕренме тытăнĕ. Вĕсенчен нумайăшĕ вара çул-йĕр правилисене пĕлмест те.

Çавăнпа та республикипех, вăл шутра пирĕн районта та, августăн 5-мĕшĕнчен пуçласа 28-мĕшĕччен «Сывлăх» тата «Çамрăк – Çемье» комплекслă оперативлă профилактика операцийĕсем пыраççĕ.

Ачасен сывлăха çирĕплетмелли лагерьсене, шкулсенче йĕркеленĕ лагерьсене, çул çитменнисем йышлă пухăнакан вырăнсене тухса пирĕн инспекторсем çул-йĕр çинчи хăрушсăрлăхпа çыхăннă тĕрлĕ мероприятисем ирттереççĕ. Шкулсенче çак тематикăпа хатĕрленĕ кĕтессем е стендсем пулнине те тĕрĕслеме йышăннă. Çавăн пекех çамрăксене сывă пурнăç йĕркине явăçтарассипе те тимлеççĕ сотрудниксем.

Ачасемпе çамрăксене инкек-синкекрен сыхлассине педагогсен тата ытти специалистсен те кирлĕ пек йĕркелемелле. Аслисем асăрхаттарса каланисем нихăçан та ытлашши пулмĕç. Инспекторсем вара уголовнăй, административлă тата гражданла кодекссен никĕсĕсемпе те паллаштараççĕ.

А. ЩЕРБАКОВ,
патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекци уйрăмĕн инспекторĕ.

Вулакансен пултарулăхĕ

Мĕн тери хавас тапать чĕре

Сарă уйăхĕ тухсассăн,
Сар хĕвелĕ çутатсассăн,
Мĕн тери хавас тапать чĕре.
Вăрмана эпĕ кайсассăн,
Лантăш чечекне татсассăн,
Мĕн тери хавас тапать чĕре.
Улăха эпĕ ансассăн,
Шăпчăк сассине илтсессĕн,
Мĕн тери хавас тапать чĕре.
Кĕрхи кунĕсем çитсессĕн,
Хурăн çулçи саралсассăн,
Мĕн тери хавас тапать чĕре.
Уй-хире эпĕ тухсассăн,
Сарă тулă хумхансассăн,
Мĕн тери хавас тапать чĕре.
Атăл хĕррине тухсассăн,
Хумĕсемпе киленсессĕн,
Мĕн тери хавас тапать чĕре.
Çыран хĕррипе утсассăн,
Шыв юххине сăнасассăн,
Мĕн тери хавас тапать чĕре.
Тăвансем патне кайсассăн,
Илем юрă шăратсассăн,
Мĕн тери хавас тапать чĕре.
Кӳлĕ хĕррине тухсассăн,
Савнă тусăма курсассăн,
Мĕн тери хавас тапать чĕре.
Тăван яла таврăнсассăн,
Хурăнлăха эп кĕрсессĕн,
Мĕн тери хавас тапать чĕре.
Тăван киле эп килсессĕн,
Атте-аннене курсассăн,
Мĕн тери хавас тапать чĕре.
Пахчана эпĕ кĕрсессĕн,
Улмуççи чечек кларсассăн,
Мĕн тери хавас тапать чĕре.
Тăван пĕр-пĕрне савсассăн,
Кĕреке тулли пулсассăн,
Мĕн тери хавас тапать чĕре.
Лăпкăн ăшă çил вĕрсессĕн,
Ман чуна лăплантарсассăн,
Мĕн тери хавас тапать чĕре.

Раиса ХĔЛХЕМ.